# **Ача**-пăча библийĕ
## **Тăратаканĕ**

# **Иисус**
# Çурални



Çыравçи: Edward Hughes

Иллюстрацилекенĕ: M. Maillot
Alastair Paterson

Адаптацилекенĕ: E. Frischbutter; Sarah S.

Куçаруçи: www.christian-translation.com

Калăплакан компанийĕ: Bible for Children
www.M1914.org

©2021 Bible for Children, Inc.
Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе
**илме** е пичетлеме ирĕк пур.



**Ёлёк-**авал Турӑ Гавриил ангела Мария ятлӑ хитре еврей хĕрĕ **патне** янӑ. Вӑл ӑна ç**апла** каланӑ**:** “Санӑн Ывӑл пулĕ**,** Эсĕ ӑна Иисус ятлӑ хурӑн**,** тенĕ. Ӑна Çӳлти Турӑ Ывӑлĕ тейĕç. Вӑл ĕмĕрех **патшара** ларĕ.”

“Мĕнле **пулать-ха çапла?”** - **ыйтрĕ** тĕлĕннĕ хĕр. - “Эпĕ пĕр арçынпа **та пулман.”** **Ангел** Марийăна ача турăран **килет тесе** каланă. **Этем** ашшĕ пулман пулĕччĕ.



Ангел Марийăна хăйĕн **аппăшĕ Елизавета** ватлăхра ачана кĕтет тенĕ. **Ку** та тĕлĕнмелле пулчĕ. Çавăн хыççăн Кăшт вăхăт иртсен **Мария Елизавета патне** кайнă. Вĕсем пĕрле **Турра мухтанă** **(тав тунă)**.



**Мария** Иосиф ятлă çынпа çураçнă пулнă.  **Мария ача** кĕтнине пĕлсен **Иосиф хуйх**ăрнă. Вăл ача ашшĕ урăх çын пулнă **тесе** шутланă.



Тӗлӗкре Турӑ ангелӗ Иосифа
ҫак ача Турӑ Ывӑлӗ тесе каланӑ.
Иосифӑн Марийӑна Иисуса
ӳстерме пулӑшмалла пулнӑ.



Иосиф Турра шаннă тата ăна итлесе пурăннă. Çавăн пекех вăл хăйĕн çĕршывĕн саккунĕсене **те** пăхăнса тăнă. Çĕнĕ **саккуна** пула вăл **Марийăпа** хăйсен



тăван **хулине** Вифлеема налук тӳлеме кайнă.

Мария ача çуратма хатёр пулнă. **Анчах** Иосиф ниçта та пÿлём тупайман. Гостиницăсем **туллиех.**



Юлашкинчен Иосиф лаша вити тупнă. **Унта Иисус** çуралнă. Амăшĕ ăна выльăх апачĕ **хумалли** сырăша выртарнă.



Инçех мар кӗтӳçӗсем хӑйсен çывӑракан кӗтӗвӗсене сыхланӑ. Турӑ ангелӗ килсе кӗнӗ те вӗсене тӗлӗнмелле хыпар пӗлтернӗ.



“Çак кун Давид хулинче сире Çăлакан çуралнă, Вăл-**Христос Турă**. **Эсир ăна** сырăшра тупатăр.”




Сасартăк Турра мухтакан тата нумай çутă ангел курăнса кайнă: “Мухтав Турра Тӳпере те, çĕр çинче те канăçлăхшĕн,
çынсене кăмăлланăшăн.”

Кĕтӳçĕсем витене васкарĕç.
**Ачана** курсан вĕсеНЕ ангелсем
Иисус çинчен мĕн каланине
пурне те каласа панă.




Хӗрӗх кун иртсен Иосифпа Мария Иисуса Иерусалимри чиркӗве илсе пынӑ.
Симеон ятлӑ ҫын пӗчӗк ачасемшӗн Турра тав тунӑ, Анна карчӑк,
Турӑ чури, унран юлман.

Иисус Турӑ Ывӑлӗ, Ҫӑлакан пулнине иккӗшӗ те пӗлнӗ. **Иосиф** икӗ кайӑка чӳ**клен**ӗ. Ҫакӑ, турӑ саккунӗ тӑрӑх, чухӑнсен **ача** ҫуралсаннӑ Турра **парне памалла** пулнӑ.




Кăшт вăхăт иртсен тухăçри çĕршыври Ăсчахсене ятарлă çăлтăр **Иерусалима илсе** çитернĕ.
“**Иудея** Патшине çуралнă Çын ăçта**?**”- тесе ыйтнă вĕсем. - “**Эпир** ăна пуççапасшăн.”

Ирод патша Ăсчахсем ҫинчен илтнĕ. Вăл вĕсене Иисуса тупсан **п**ĕлтерме ыйтнă. - Манăн та ăна пуççапас **килет, -** терĕ Ирод. **Анчах** вăл суйнă. **Ирод** Иисуса вĕлересшĕн пулнă.




Ăсчахсене çăлтăр Марияпа Иосиф
пĕчĕк ачипе пурăннă çурт патне илсе
çитернĕ. Çулçӳревçĕсем
турра пуççапнă чухне
чĕркуçленсе ларса
Иисуса ылтăнпа ырă
шăршăлăх панă.

Турă Ăсчахсене хăйсен **килне** вăрттăн таврăнма асăрхаттарнă. **Ирод** тарăхса кайнă. **Иисуса** тĕп тума шут тытнипе усал пуçлăх **Вифлеемри ачасене пурне те** вĕлернӗ.



Анчах та Ирод Туррăн Ывăлне сиен кӳме **пултарайман!** **Иосиф** тĕлĕкре асăрхаттарса каланипе Марийăпа **Иисуса Египета илсе** кайнă.



**Ирод вилсен Иосиф** Марийăпа **Иисуса Египетран илсе** килнĕ.



Вĕсем **Галилея** тинĕсĕнчен инçех мар **Назаретри** пĕчĕк хулара пурăннă.

**Иисус** Çурални

Туръ Сăмахĕнчи, Библири, халап

**ра вырнаçнă**

**Матфей 1-2, Лука 1-2**

“Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать.”
**Псалом 119:130**

Bĕç̆ĕ

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет.  Çылăхшăн **наказани**-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юратать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă.  **Унтан** Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă!  **Эсир** Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ!  Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

Эсир ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр: Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ.  Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп.  **Мана** сана пăхăнса тăма, саншăн ачу **пек** пурăнма пулăш.  **Аминь.**

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр!   **Иоанн 3:16**